Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 66 (4635) *1998 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 10-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

## Ĕçчен валли ĕç çителĕклĕ

### "Тухăç - 98" пресс-группа пĕлтерет

Юриех, мелиораторсен уявĕ умĕн çунă çумăр ял ĕçченĕсен кăмăлне кăшт çĕклерĕ, анчах вăл пур çĕрте те иртмен иккен: хресченсен хуçалăхĕсен "Рассвет", Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕсен тата ытти хăш-пĕр хуçалăхсене витрешер шыв лекрĕ пулсан, ыттисене, пачах урăхла, пĕрер кашăк. Çавăнпа та шăвармалли техника лайăх сыхланса юлнă хуçалăхсенче искусственнăй майпа ăнăçлă шăвараççĕ. Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацире 150 гектар çинчи нумай çул ӳсекен курăксене шăварнă, "Рассвет" хуçалăхра çак ĕçе чылай лаптăксем çинче пурнăçланă, "Кондурча", Кузнецов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче те шăвармалли установкăсем кăлтăксăр ĕçлеççĕ.

Çакăнпа пĕрлех температура чакни калчасене вăй илме май парĕ. Çитменнине, çурхи культурăсен анисене минераллă удобренисемпе тымартан хушса апатлантарнă. Çавăнпа халь çĕр ĕçченĕсем ӳсентăрансене пур енчен те хӳтĕлессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Çурхи тĕштырăсене тĕрлĕ чирсемпе хурт-кăпшанкăсенчен ĕçлесе хатĕрлессине мĕнпур лаптăксен пĕрре виççĕмĕш пайĕ çинче пурнăçланă, çумкурăксенчен - тата та ытларах. Юлашкине илсен, халь мĕнпур тимлĕхе сахăр чĕкĕнтĕр анисене уйăраççĕ. Мичурин ячĕпе хисепленекен, Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Киклĕ", "Игенче", "Рассвет", Кузнецов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче, сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕнче пĕрĕхтерекен агрегатсем чĕкĕнтĕр йăранĕсемпе пĕр хут иртнĕ ĕнтĕ. Çак агромероприятисене вĕçленисем хирсене иккĕмĕш хут гербицидсемпе ĕçлесе хатĕрлеме шутлаççĕ.

Кукуруза калчисен речĕсем хушшине кăпкалатма пуçăннă хуçалăхсем те сахал мар. Çак ĕçе "Киклĕ", Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Кондурча" ассоциацисенче активлă ирттереççĕ, "Чулпан", "Рассвет", "Татарстан", "Алга" ассоциацисенче те ăна вăхăтлă пурнăçлама тăрăшаççĕ.

Уяр çанталăк тăрать пулин те, çу хăйĕннех тăвать, акă ялта хĕрӳ утçине тухмалли кун та çитĕ. Ку енĕпе выльăх апачĕсем хатĕрлемелли кампание тухăçлă йĕркелес ыйтусем тĕлĕшпе кустсенчи семинарсем иртĕç. Хăш-пĕр хуçалăхсенче утă çулма тытăннă ĕнтĕ. Çав вăхăтрах хресченсен хуçалăхĕсен "Рассвет" ассоциацийĕнче путек милĕкĕ хатĕрлеме пуçланă, М.Джалиль ячĕпе хисепленекен, Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацисенче - эмел курăкĕсем.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе тăтăшах ешĕл конвейерпа тивĕçтересси пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусенчен пĕри пулса тăрать, çавăнпа та "Заветы Ильича", "Черемшан", Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Рассвет" хуçалăхсенче кĕрхи культурăсен анисем çинче выльăхсем кĕтнĕ участоксене хутăш курăксем иккĕмĕш хут акнă.

Кĕскен каласан, хальхи вăхăтра ялта ĕç вĕресе тăрать, çамка çинчен тара сăтăрма çеç ĕлкĕр.

## Шанăç çутисем

**Ялсене - газ**

Патшалăх комиссийĕ çутçанталăк газĕпе усă курма ирĕк панă çуртсен шучĕ кунсерен ӳсет. Çуткӳл ялĕнче кăна Димитровград хулинчи 14-мĕш МСУ газовикĕсен ĕçне лайăх хак парса иртнĕ эрнере комисси тата 27 çурта йышăннă, çапла майпа çутçанталăк газĕпе кунта халь 40 çемье усă курать.

Газовиксем малалла тăрăшса вăй хураççĕ, вĕсем районти ялсенче пурăнакансене йăлари меллĕхпе савăнтарас тесе тăрăшаççĕ. Сăмахран, Бикулово, Анат Нурлат тата ытти ялсенче ку ĕç лайăх пырать, Андреевка ялĕнче те газ кĕртнĕ çуртсен шучĕ ӳснĕçемĕн ӳсет. Çак кунсенче Вырăс Менчи ялĕнче те патшалăх комиссийĕ килессе кĕтеççĕ, унта "ЭСКА" фирма ĕçлет.

## Акатуй - пурте пулăшнипе

Акатуя тивĕçлипе ирттересси укçа-тенкĕ сахал мар тăкаклама хистет. Ăна ирттерессипе ĕçлекен йĕркелӳ комиссийĕ пĕлтернĕ тăрăх, кăçал спонсорсен пулăшăвне анлăрах явăçтарма палăртнă. Чи пуян спонсорсен шутĕнче "РИТЭК" АО Генеральнăй директорĕн В.И.Грайферăн ятне калаççĕ: вăл нурлатсене уяв валли 50 пин тенкĕ уйăрнă. Район администрацийĕ ку тĕллевпе 11 пин тенкĕ уйăрса панă. Унсăр пуçне предприятисемпе организацисенчен чылайăшĕ тĕрлĕ йышши ăмăртусенче çĕнтернисене парнесем парассине хăйсем çине илнĕ. Çапла, "Нурлатнефть" НГДУ "Ока" автомашина уйăрĕ, "Татнефть-Нурлатнефтешырав" ООО, "Нурлат" агрофирма, сахăр завочĕ, райпо, Зузеевăри нефть промысли вара - "Урал" мотоциклсем. Призерсене наградăлама элеватор, ДРСУ, НУАД, машинăсем тăвакан завод, 53-мĕш СМУ, "Агрохимсервис" АО, РСУ, Тĕрнеçри спирт завочĕ, вăрман хуçалăхĕ, геофизика ĕçĕсен управленийĕ телевизорсем уйăрĕç, "Нурлатнефтепродукт" АО, сĕт-çу комбиначĕ, çăкăр завочĕ, РИТЭК-Гео - холодильниксем, 1-мĕш тата 547-мĕш номерлĕ куçса çӳрекен механизациленĕ колоннăсем - кĕпе-йĕм çăвакан машинăсем.

Çаплах 18 предприятипе организаци ку тĕллевпе кавирсем туянĕç, 10-шĕ - магнитофонсем. Банксем укçа-тенкĕпе пулăшĕç - "Девон-Кредит", "СБС-АГРО", "Ак Барс", РКЦ. Уйрăм предпринимательсем Г.Яруллин, И.Ларин, М.Шапкин, В.Бойкова, С.Валиева, С.Галиева, С.Борзова, М.Хашифова, Д.Мингалеев та хăйсен тӳпине кĕртнĕ.

## Ĕç уявĕ иртрĕ

**Çуркуннехи халăх уявне чи малтан хресченсен хуçалăхĕсен "Рассвет" ассоциацийĕнче ирттернĕ.**

Çав кун ялта пурăнакансене чугун çул ОРСĕн, вăрман хуçалăхĕн, ашкакайпа апатçимĕç комбиначĕсен, çаплах ассоциацин магазинĕсем мĕн кăна сĕнмерĕç пулĕ. Вăрманти илемлĕ уçланкăра 20 яхăн сутуилӳ точки ĕçлерĕ.



Ялти Акатуя Нурлат хулипе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин хутшăнчĕ. Уяв пуçлансанах Фатих Саубанович сăмах илсе ял ĕçченĕсем çурхи тапхăрта хастар ĕçленипе кăмăллă пулнине палăртрĕ, вĕсене лайăх канма сунчĕ. Наци уявне уçма çаплах ялти мулла Хамзя Сингатуллин пычĕ, вĕсене вăл пиллерĕ. Хуçалăх председателĕ А.Н.Рахматуллин çурхи ака вăхăтĕнче вăй хунă çĕр ĕçченĕсен ĕçне тишкерсе тухса вĕсене тав турĕ. Вĕсенчен чи хастар ĕçчен Файзулла Бикинеев Акатуй ялавне çĕклеме тивĕç пулчĕ.

Акатуй наци уявĕн пĕтĕм тĕсне кăтартрĕ. Канат туртасси, кĕрешни, михĕсемпе çапăçни - кашни вăйă хăйĕн илемĕпе палăрса тăчĕ. Тайăлтарнă пĕрене çумне çыхса хунă такана Ильяс Шарафиев тракторист çăмăллăнах илчĕ, автана илес теkennисен хушшинче Ревер Мухамметвалиева çитекенни пулмарĕ. Чи çивĕч ăмăртура - наци кĕрешĕвĕнче Минталип Сатдаров çĕнтерӳçе тухрĕ. Лашасемпе чупса ăмăртмасăр мĕнле Акатуй пулать-ха! Çав кун кунта Тури Нурлатран, хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнчен урхамахсем килнĕччĕ. Вĕсен хушшинче Тури Нурлатри "Дархапа" "Альби" çĕнтерчĕç, рысаксем хушшинче вара - хăйсен "Гамми". Унăн хуçине Ханиф Низамутдинова парне - кавир - администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин хăй пачĕ.

## Вăхăтлă тата туслă

Хресченсен хуçалăхĕсен Кузнецов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче сахăр кăшманĕ акнă лаптăксем пурĕ 450 гектар шутланаççĕ. Культурăна, тĕпрен илсен, французсен технологийĕпе ӳстереççĕ. Гербицидсемпе ĕçлесе хатĕрленĕ çĕрте Юрий Имуковпа шыв турттаракан Виталий Саврандейкин вăй хураççĕ. Ĕç кунĕ вĕсен ирхине 4 сехетре пуçланать. Шăрăх вăхăтра канса илнĕ хыççăн механизаторсем тĕттĕм пуличчен ĕçлеççĕ. Çĕр ĕçченĕсем тăрăшнин кăтартăвĕсем куç умĕнче.

Ӳсентăрансем лайăх шăтнă. Анчах та çанталăк типĕ тăни кансĕрлет. Çавăнпа та кунта унчченхи çулхи опыта пăрахăçлама васкамаççĕ. Алă вăйĕпе ĕçлемелли лаптăк сахал - пурĕ те 36 гектар çеç. Участоксене никама та вăйпа паман. 2,7 гектар Якуркелĕнчи шкулта вĕренекенсем илнĕ, 6-шне - Хуралтăвĕнчи шкул, бухгалтери хĕрĕсем те пысăках мар пай йышăннă. Ытти пайсем çине вара хăйсен кăмăлĕсемпе 12 çемье тухнă. Вĕсен хушшинче ветерансем - пенсионерсем те, пурнăç тăршшĕпе тутлă тымар çитĕнтернĕскерсем, çамрăксем те пур.



Пĕлтĕр алă вăйĕпе çумланă участоксем 150 гектар ытларахчĕ. (Паллах, ун чухне ĕçлекенсем те нумайрах кирлĕ пулнă ĕнтĕ). Кăçал вара "Нурлатсахар" акционер обществин ертӳçисем районти хуçалăхсене гербицидсемпе çителĕклĕ чухлĕ тивĕçтернĕ. Çавна пула хĕрарăмсен йывăр ĕçĕ те чакнă, хирсем те таса. "Килĕштерсе ĕçлени, пурне те вăхăтлă пурнăçлани кăмăла çĕклет, пуян тухăç пухса илме шанăç парать", - теççĕ ял çыннисем. Ан тив, çапла пултăрччĕ.

**Ӳкерчĕкре: Иван Георгиевич Иванов механизатор ретсем хушшине ĕçлесе хатĕрленĕ çĕрте.**

Н.АЗИЗОВ
сăнӳкерчĕкĕ.

## Техника творчествин конкурсĕнчен

# Професси суйласа илесси шкултан пуçланать

***Районти вĕрентӳ пайĕ вĕренӳпе воспитани процесĕнче класс тулашĕнчи мероприятисемпе тухăçлă усă курать. Çакна май уйăхĕн вариинче ӳкерме юратакансен выставкине йĕркелени (унта тĕпрен илсен, учительсемпе изоискусство преподавателĕсен ĕçĕсене тăратнă), çаплах нумаях пулмасть иртнĕ техника творчествин конкурсĕ çакна çирĕплетет.***

Техника творчествин ĕçĕн выставки Çамрăксен çурчĕн фойинче пуçланчĕ, тĕрĕсрех каласан, çурт умĕнчи площадкăра Кивĕ Чаллăри вăтам шкулта вĕренекенсем пуранă çурт макетне вырнăçтарнăччĕ.

Çав кун талантсен смотрне районти 36 шкултан 40 çын хутшăнчĕ. Конкурса уçнă тата тăратнă ĕçсене хак панă çĕре администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев, пуçлăхăн вĕрентӳ, культурăпа социаллă ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ Н.Х.Абдуллин, халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн председателĕн çумĕ А.Н.Ельченков хутшăнчĕç. Ĕçсене авторитетлă жюри хак пачĕ. Выставка йĕркелекенсем каланă тăрăх, çынна çутçанталăк çеç мар, алăпа ăсталанă япаласен тĕнчи те илĕртет. Çак конкурсра тăратнă изделисем - ку вăл япаласен пысăк тĕнчин пĕчĕк пайĕ çеç. Апла пулин те кунти кашни япалана ăста, пĕлсе пурнăçлани туйăнать. Хăшпĕр ĕçсем вара питĕ илемлĕ пулнипе тыткăна илчĕç, вĕсене художество музейĕнчен вăхăтлăха илнĕ пекех туйăнчĕ.

Куракансем изделисем тĕрлĕрен пулнинчен питĕ тĕлĕнчĕç, инкрустаци меслечĕпе капăрлатнисене уйрăм хак пачĕç, вĕсене пăхса ытармалла марччĕ. Тĕкĕрмелĕнчи вăтам шкул тăратнă (учителĕ А.Г.Гурьянов) арча тата ытти изделисем 1-мĕш вырăна тивĕç пулчĕç, Анат Чаллăри вăтам шкул тăратнă (учителĕ С.А.Шартынов) килти ĕçсене пурнăçламалли япаласем 2-мĕш вырăн, Чиешнери шкул (учителĕ И.А.Блинов) хурăнпа çăкаран тунă тата тĕрлĕ йывăçпа усă курса илемлетнĕ алăк та 2-мĕш вырăн йышăнчĕ. Якуркелĕнчи вăтам шкулти çавра япаласем тăвакан станок (учителĕ Ю.И.Белов) 3-мĕш вырăн, шкул-интернатра тунă куллен кирлĕ пулакан хатĕрсем (учительсем М.В.Спасовпа А.В.Зиничев) виççĕмĕш вырăн, Андреевкăри вăтам шкул илсе килнĕ çу арманĕпе çăкăр савăчĕ (учителĕ А.Н.Данилов) виççĕмĕш вырăн, хулари 2-мĕш номерлĕ вырăс-тутар шкул-гимнази тăратнă кил-çуртра куллен кирлĕ пулакан япаласем (учителĕ В.М.Измайлов) 3-мĕш вырăн йышăнчĕç. Пĕрремĕш виçĕ вырăна йышăннисене I-III степень дипломсемпе тата пĕрремĕш вырăна йышăннисене пĕр уйăхри ĕç укçин 75, 50 проценчĕ чухлĕ преми пама йышăнчĕç. Хăшпĕр вĕренекенсене те I, II, III степень дипломсем тата хавхалантармалли парнесем пачĕç.

Этем хăйĕн ĕçĕпе илемлĕ, теççĕ халăхра. Ĕçе вĕрентекен учитель ачасене усăллă тĕрлĕ ĕçе хăнăхтарма тăрăшать. Результат куç умĕнче пулсан вара учитель хăйĕн савăнăçĕпе мăнкăмăллăхне пытармасть. Анат Чаллăри вăтам шкул учителĕ С.А.Шартынов ку тĕлĕшпе çапла шухăшлать: “Ху вĕрентекен ачасенче хăвăн ĕçне курсан вара икĕ хут савăнăçлăрах”. Кивĕ Чаллăри вăтам шкул учителĕ В.И.Белогубов ытти шкулсенчи ĕçтешĕсен пĕрлехи шухăшĕсене пĕтĕмлетсе акă мĕн каларĕ:

- Ку выставка шкулти ĕç урокĕн пĕлтерĕшĕ çинчен урăхларах шухăшлаттарĕ, халлĕхе вара ăна иккĕмĕш планра тăракан предмет вырăнне хуни питĕ кӳрентерет. Чăннипе вара, шкул ачасене мĕн чухлĕ хăнăху, професси парать вĕт: аттестатпа пĕрле чылайăшĕ механизатор, водитель специальноçĕсен свидетельствисене илеççĕ, килти хуçалăха илсе пыма, çĕлеме, тĕрлеме, столяр, токарь ĕçĕсене вĕренеççĕ. Çаплах çак предметсене вĕрентекенсенчен халь хытă ыйтаççĕ. Халь ĕç урокне илсе пыракан учительсенчен чылайăшĕ аслă е вăтам пĕлӳ туяннă, вĕсенчен кашни - хăйĕн профессийĕпе хастарлăх тата ăсталăх кăтартать. Çавăнпа та халь пирĕн ĕçе пысăк хак панине илтме питĕ кăмăллă. Ан тив, вăл сăмахпа каланипе кăна ан пултăрччĕ...

**К.ЯМАЛЕТДИНОВА.**

**Н.АЗИЗОВ СĂНӲКЕРЧĔКĔСЕМ.**



Тĕкĕрмелсем I степень дипломне тивĕç пулнă.









Шкул-интернат учителĕ М.В.Спасов хăйĕн ĕçĕсене кăтартать.

## *Вулакан пăшăрханать*



Хаклă редакци! Сирĕн хаçатăра эпĕ пĕрремĕш çул кăна мар çыrăнса илетĕп. Эсир тĕрлĕ ыйтусем хускататăр - пысăккисене те, пĕчĕккисене те. Акă эпĕ те çырас терĕм. Астăватăр пулĕ, “Вечерняя Казань” хаçатра “Уççăн калаçма пĕр минут” рубрика пур. Сире вара ку тĕллевпе мана темиçе йĕрке уйăрма ыйтатăп...

Вăхăт çав тери хăвăрт иртет-çке. Нумаях пулмасть дачăра çĕрулмине пухса илтĕмĕр пек туйăнать, акă çĕнĕ йăрансем те ешереççĕ. Пĕрремĕш “хăнасем” те пырса курчĕç. Кĕтменнисем. Пĕр ирхине кӳршĕ кăшт ĕçлекелеме пычĕ, анчах - кăмăлĕ тӳрех пăсăлчĕ: çурт çăрине çĕмĕрнĕ, çӳп-çап йăваланса выртать, çитменнине, ан çиллен имĕш, тесе çырса хăварнă. Вăл ăслă-тăнлă этем, дачăна йĕркене кĕртнĕ те çăрапа питĕрнĕ, уççине пытарман, çавăнтах пăта çине çакса хăварнă... Тепĕр пĕлĕшĕн участокĕнче нӳхреп пур, унтан тăварланă пахча çимĕçне çаратса тухнă, юлнă кĕленче савăтне ватса хăварнă. Виççĕмĕшĕнне - вăл çав тери тирпейлĕскер - дача çурчĕн чӳречисене çĕмĕрсе пĕтернĕ, стена çинчи тĕкĕрне илсе кайнă, шпалерне тăрăхăн-тăрăхăн каскаланă - çапла хăтланма кам ирĕк панă, мĕншĕн? Манăн çывăх тус-хĕрарăмăн “Сывлăх” юлташлăхра участок пур, ăна тӳрех асăрхаттарнă: чечексем лартмалла мар, пурпĕрех çăлса пĕтереççĕ, çитменнине, тĕттĕмре йăрансене таптаса тухаççĕ. Мĕн унта чечексем... Пĕлтĕрхи август уйăхĕнче сухана илсе кайрĕç. Тĕрĕс ĕнтĕ, суйласа - чи вĕттине хăварнăччĕ. Кишĕре те чавса кăлараççĕ, ыхрана та, помидорсемпе хăяра та тиркемеççĕ. Ют çынсен пурлăхне вăрлама вĕсен аллисем мĕнле çĕкленеççĕ-ши? Çынсем хĕле валли тухăç ӳстерес тесе тăрăшаççĕ вĕт, йăрансене çумласа, шăварса мĕн чухлĕ вăхăт ирттереççĕ...

Вăрăсем хушшинче аслисем те, ачасем те пур пулĕ тесе шутлатăп. Тар тăкса акса ӳстернĕ пахча çимĕçе ют пахчаран илсе каятăр пулсан, мĕншĕн хăвăрăн хыççăн йĕркесĕрлĕх хăваратăр? Мĕншĕн пире çĕр çинче ĕçлесе савăнма памастăр? Çыртăм та-ха, хам шухăшлатăп: çав çынсем хаçат та вуламаççĕ пулĕ...

**В.ЛУКОЯНОВА.**

### Ҫулла - сӗт нумай суса илмелли тапхӑр

# Ҫарансем кӗтеҫҫӗ

**Хресченсен хуҫалӑхӗсен "Киклӗ" ассоциацийӗнчи выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекенсем выльӑхсене ҫуллахи лагерьсене куҫарнӑ.**

Унччен вара тӗплӗн хатӗрленнӗ: Вагиз Айсин ертсе пыракан бригада Киклӗри лагерьсене тивӗҫлипе юсанӑ, дояркӑсем вара вӗсене шуратса дезинфекциленӗ. Ҫапла, выльӑхсем халь вагонсенче, дояркӑсене ӗнесем сума кунне икӗ хутчен автобуспа илсе килеҫҫӗ.

- Мӗн каламалли ӗнтӗ, кӗтӳ тухсан сӗт икӗ хут ӳсрӗ, - теҫҫӗ дояркӑсем.

Урӑхла пулма та пултараймасть, - выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ, фураж та параҫҫӗ, ҫакӑ кӗтме тухнисӗр пуҫне тата. Кӑнтӑрла Анвар Гафиятуллинпа Юсуф Мустафин кӗтеҫҫӗ, ҫӗрле вӗсене Рахимулла Халиуллинпа Рашит Сунгатуллин улӑштараҫҫӗ. Ӗнесем тутӑ, ҫавӑнпа сӑвӑм кӑтартӑвӗсем те ӳсӗнтераҫҫӗ. Ҫапла, "Киклӗ" кооперативра пӗр кунхи сӑвӑм кӑтартӑвӗ 14 килогрампа танлашать, ку пӗлтӗрхинчен пӗр килограмм ытларах шутланать. Опытлӑ дояркӑн Роза Билалован ушкӑнӗнче сӑвӑм пӗр пӑта ҫитет. Лилия Аштраповапа Сания Гафиятуллина унран кӑшт ҫеҫ каярах пыраҫҫӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ хуҫалӑх районта сӗт суса илессипе малта пыракансен шутне кӗрет. Ҫавӑнпа пӗрлех сӗт ҫулӑхӗ те, таварлӑхӗ те ҫӳллӗ шайра. Хуҫалӑх кашни кун йышӑну пунктне 9 тонна продукци ӑсатать.

Киклӗсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессинче те, тырпул ӳстерессинче те ӳсӗмсем туни савӑнтарать. Выльӑхсен йышне те ӑнӑҫлӑ ӳстереҫҫӗ кунта. Пӗлтӗр май уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче мӑйракаллӑ шултра выльӑх 1772 пуҫ шутланнӑ пулсан, кӑҫал ҫак тапхӑр тӗлне 1944 пуҫ. Ҫакӑнтан ҫамрӑк выльӑх илнин кӑтартӑвӗ те - пӑрусем пӗлтӗрхинчен 22 пуҫ ытларах. (Сысна ӗрчетессинче вара 551 пуҫ ытларах). Ҫак ӳсӗм ӑнсӑртран пулман ӗнтӗ. Вӑл мӗнпур енчен тӑрӑшса ӗҫленинчен килет, ҫав шутра техникӑпа йӗркелӳ ӗҫне пурнӑҫланинчен те. Кунта хуҫалӑх ертӳҫисем Киклӗри сӗт-ҫу фермин заведующийӗ Валерий Загирович Билалов тата Кислеври Ислам Гареевич Гималетдинов ҫинчен мухтаса калаҫаҫҫӗ. Юлашки хуҫалӑхра уйрӑмах лайӑх условисем тунӑ, кунта чӗчӗ пӑрушӗсен ушкӑнне пӑхакан Сания Каримован вӑйӗ пысӑк. Ҫу тапхӑрӗ - нумай сӗт суса илмелли чи ӑнӑҫлӑ вӑхӑт, ҫавӑнпа та вӑл выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансемшӗн те чи яваплӑ шутланать. Выльӑхсене талӑкӗпе кӗтесси, тӑтӑшах ешӗл апатпа тивӗҫтересси, ҫав вӑхӑтрах продукци пахалӑхне сыхласа хӑварасси - шӑп ҫак задачӑсене тӗпе хурса тӑрӑшаҫҫӗ хуҫалӑх ӗҫченӗсем. Санитари нормисене пӑханасси, пӑрулаттармалли уйрӑма йӗркеллӗ ӗҫлеттересси - ку ыйтусене те тимлӗхре тытаҫҫӗ. Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ, ҫак мӗнпур факторсем продукци нумай илме пулӑшаҫҫӗ вӗт. Ҫавӑнпа та "Киклӗ" ассоциацире выльӑхсене ҫуллахи лагерьсене куҫарнӑ пӗрремӗш кунранах пикенсе, тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫленин ларутӑрӑвӗ хуҫаланнӑ. Ан тив, коллектив ҫу тата ҫулталӑк тӑршшӗпе ҫапла туслӑ ӗҫлесе ӑнӑҫусем тутӑр.

**С.НУРУЛЛИНА.**



## Ылтӑн алӑллӑ ӑстаҫӑ

**- Александр Георгиевич? Унӑн аллисем ылтӑн. Темиҫе ҫул хушши пӗр вырӑнта ларнӑ трактора юсаса ӗҫлеме юрӑхлӑ турӗ, - терӗ Прокопьев ҫинчен хресченсен хуҫалӑхӗсен "Родина" ассоциацийӗн ертӳҫи. Александр Георгиевич хирти ҫурхи ӗҫсем вӑхӑтӗнче те хӑйне лайӑх енчен кӑна кӑтартнӑ, малашне те вӑл тӑрӑшса вӑй хурасса шанма пулать.**

**Ӳкерчӗкре: хресченсен хуҫалӑхӗсен "Родина" ассоциацийӗн механизаторӗ А.Г.Прокопьев.**

# Асӑрхаса ӗлкӗреймесен,..

кирек мӗнле ӗҫ те юхӑнса кайма пултарать. Сӑмахран, "Комбайн" ассоциацие илер. Унта сӗт суса илессипе ӗҫсем кӑҫал тӗлӗнмелле хӑвӑрт лайӑхланчӗҫ, хуҫалӑх сахал мар вӑй хунӑ хыҫҫӑн кая юлнисен шутӗнчен тухма тытӑнчӗ. Пилӗк уйӑхра кашни ӗнерен вӑтамран 850 килограмм сӗт суса илсе, патшалӑха 728 килограмм продукци сутнӑ. Сӗт ҫулӑхӗ те базислинчен пысӑкрах - 3,78 процент, продукцин 93 процентне пӗрремӗш сортпа йышӑннӑ.

Анчах ҫак кӑтартусем пилӗк уйӑхрисем кӑна. Май уйӑхӗнчи кӑтартусем вара пачах урӑх. Сӗт-ҫу комбинатне хуҫалӑх 703 центнер продукци ӑсатнӑ, йышӑннӑ вара пурӗ 689 центнер, мӗншӗн тесен сӗт ҫулӑхӗ пурӗ 3,53 процент ҫеҫ шутланнӑ. Продукцин чӗрӗк пайӗ II сортпа кайнӑ. Виҫҫӗмӗшӗнчен, пӗрре виҫҫӗмӗш пайне тивӗҫлӗ температурӑна ҫити сивӗтмесӗр илсе килнӗ. Ҫак виҫӗ сӑлтава пула кӑна хуҫалӑх 9 пин те 900 тенкӗ ҫухатнӑ. Ҫакӑн ҫумне май уйӑхӗнчи пӗр кунра ытлашши йӳҫеклӗхлӗ 1200 килограмм сӗт сутнипе тӳснӗ тӑкаксене хушсан...

Ҫавӑнпа та ял хуҫалӑх продукчӗсем сутӑн илес тата вӗсен пахалӑхне тӗрӗслес енӗпе ӗҫлекен инспекторсем Н.И.Фоминпа А.П.Белякова, ял хуҫалӑхӗпе апат-ҫимӗҫ управленийӗн выльӑх-чӗрлӗх пайӗн начальникӗ А.И.Ухваньков, сӗт-ҫу комбиначӗн ОТК начальникӗ Н.В.Кудряшова ҫав хуҫалӑхра пулса курса, ӗҫсен ҫакӑн пек лару-тӑрӑвӗн сӑлтавӗсене тӗпчесе пӗлме шутланӑ. Унта курни вара питӗ пӑшӑрхантарса янӑ.

Чи малтан, иккӗмӗш фермӑн ҫуллахи лагерӗнче выльӑхсен рационӗ питӗ чухӑн - ирхи сӑвӑма хӑваласа кӗртнӗ ӗнесене 1,5-шер килограмм ҫеҫ концентрат параҫҫӗ. Тӗрӗс ӗнтӗ, сӑвакан ӗнесене кунта кӗрхи культурӑсен анисем ҫинче кӗтессине йӗркеленӗ, ҫапах та выльӑхсен организмне питӗ кирлӗ утӑ-улӑм пӗрчи те курӑнмасть. Пӑракана та кая юлса илсе килеҫҫӗ, вӑл вара каҫхи сӑвӑмчен йӳҫӗхсе каять, паллах, унран ним усси те ҫук.

Дояркӑсем ҫитменни те ӗҫ кӑтартӑвӗсем ҫинче япӑх енчен палӑрать. Вӗсенчен кашнине 40-шер пуҫ тивет вӗт, паллах, пурне те сӑнаса ӗлкӗрме май ҫук. Васканипе, хӗвӗшнипе, сӑвакан аппаратсене майлаштарас тӗлӗшпе ӗҫлеменнипе выльӑхсен пӗр ушкӑнӗнче мастит пуҫланнӑ. Ҫавӑнпа сунӑ вӑхӑтра 20 килограмм сӗте пӑрахӑҫлама тивнӗ. Ҫиллисене сӗрмелли вазелин та ҫук, ку тӗллевпе усӑ куракан ӗне ҫӑвӗ ҫӳпӗпе хушӑнса пӗтнӗ. Сумалли аппаратсем иртсе ҫӳренӗ ҫӗрте тӑраҫҫӗ, унта вара апатсене салатнӑ чухне вӗсем вараланаҫҫӗ. Паллах, аппаратсем кӑлтӑксӑр ӗҫлени пирки калаҫма тӳр килмест. Продукци пахалӑхне илес пулсан, ҫав кун инспекторсем дояркӑсенчен пӗри сӗте шыв хушнине палӑртрӗҫ.

Уҫласа илекен шланга тивӗҫлипе чӳхемеҫҫӗ, ҫаплах кунта ҫумалли ятарлӑ хатӗрсем пуррине пӑхмасӑр, емкоҫсене дезинфекци ирттермелли шӗвек хатӗрлесе апаланмаҫҫӗ. Сӗтӗн калӑпӑшӗпе пахалӑхне те сӗт-ҫу комбинатӗнче ҫеҫ палӑртаҫҫӗ, мӗншӗн тесен хӑйсен лагерӗнчи лабораторри ӗҫлемест. Продукци ҫулӑхне те палӑртмаҫҫӗ, виҫе пур пулин те дояркӑсенчен те сӗте виҫсе йышӑнмаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах халӑхран пуҫтаракан сӗте те лайӑх пахалӑхпа ӑсатас тесе тӑрӑшманни паллӑ пулчӗ.

Кӗскен каласан, "Комбайн" ассоциацин пӗр ферминче пулса курни те унти лару-тӑрӑва кӑтартрӗ. Шел пулин те, кун пек тӗслӗхсем ытти хуҫалӑхӗпе те пур. Ҫавӑнпа та ыттисемшӗн урок пултӑр тесе ял хуҫалӑхӗпе апат-ҫимӗҫ управленийӗн ертӳҫисем "Комбайн" хуҫалӑх председательне хытӑ асӑрхаттарма йышӑннӑ.



*Актуаллӑ ыйту*

# Вӑрӑ килет ҫурт юлать,

вут-кӑвартан кӗл юлать теҫҫӗ халӑхра. Пурте тӗрӗс. Юлашки вӑхӑтра пирӗн патра тата кӳршӗ Бикуловӑпа Хумаел ялӗсенче пулнӑ пушарсем хӑйсен вӑйне тепӗр хут кӑтартрӗҫ. Ҫакӑн пек чухне халӑх пӗр ҫын пек пулса вут-кӑварпа кӗрешмен пулсан, ҫур ял ҫунса кайнӑ пулӗччӗ. Ҫуламалли-сӗрмелли материалсем турттаракан водителӗн Х.Я.Насыбуллинӑн пулӑшӑвӗ те кунта питӗ вырӑнлӑ пулчӗ. Унӑн машини яланах юсавлӑ. Анчах та ҫаксем пурте ҫынсем тӑрӑшнипе кӑна тытӑнса тӑраҫҫӗ. Халь штатра тӑракан пушарниксем ҫукки питӗ шел, вӗсем ҫак инкексене сирсе яма пулӑшнӑ пулӗччӗҫ. Пирӗн ялта ӗлӗкрех пушар посчӗ пулнине астӑватӑп-ха. Пушарниксем килӗрен киле ҫӳресе пушар хӑрушсӑрлӑхӗн правилисене пурнӑҫланипе пурнӑҫламаннине тӗрӗслетчӗҫ, вӗсем нимӗн те асӑрхамасӑр хӑвармастчӗҫ, канашсем паратчӗҫ. Хӑйсем те вӗсем кӗтменлӗх тӗлне яланах хатӗрччӗ. Ҫиллӗ кун кам та пулин мунча хутса янӑ пулсан, штраф пама та пултаратчӗҫ. Юлашки пушарник пирӗн патра Миннихан Сагиров пулчӗ, вӑл тӳрӗ кӑмӑллӑ та хытӑ ыйтакан ҫынччӗ. Хӑйӗн дежурствине вӑл талӑкӗпех ура ҫинче ирттеретчӗ, хуҫалӑх объекчӗсене сыхлатчӗ, вӑхӑтлӑ асӑрхаттаратчӗ. Эпир халь те ӑна час-часах аса илетпӗр (вӑл вилнӗ), мӗншӗн тесен халь ун пек ҫынсем ҫук. Мӗн пытармалли пур, хамӑр та халь эпир питӗ тимсӗр вӗт. Картишсем таса мар, пур ҫӗрте те йӗркесӗрлӗх хуҫаланать: унта та кунта строительство материалӗсем, вутӑ йӑваланса выртаҫҫӗ. Ҫуртсене ҫума-ҫумӑн лартаҫҫӗ, вӗсем хушшине кирлӗ чухлӗ вырӑн хӑвармаҫҫӗ. Ялти ҫамрӑксем каҫхине кивӗ, хуҫасӑр ҫуртсене пуҫтарӑнаҫҫӗ, вӗсен кашнин аллинче зажигалкӑсем ялтӑртатаҫҫӗ - вӗсене кам сыхласа ӗлкӗртӗр. Халь урамсенчи йӗркесӗрлӗх никама та пӑшӑрхантармасть. Ҫакӑн пек тимсӗрлӗх вара час-часах инкек патне илсе пырать. Манӑн хамӑн шухӑш ҫакӑн пек: кашни ялта ӑнлантару ӗҫӗ ирттермелле, вӗсен пурин те пушартан сыхланмалли, вут-кӑварпа кӗрешмелли хатӗрсем пулмалла. Пушар посчӗсене ҫӗнетес тата кирлӗ хатӗрсемпе тивӗҫтерес ыйтусене татса парассишӗн самоуправленин вырӑнти Совечӗсен ертӳҫисем тӑрӑшмалла. Ҫак ыйтусене татса парсан, "хӗрлӗ автан" та ун пекех хӑрушӑ пулмӗччӗ.

Сыхланакана Турӑ сыхлать вӗт.

**И.ШАЙХИЕВ.**



# Картари кашкăр

## Чăн пулни

Питĕ кăсăк пулăм каласа панăччĕ мана пĕррехинче Юрий Николаевич Мордвинов сунарçă. Малтан вăл Пӳлеркӳл ялĕнче пурăннă, халĕ вара - Нурлатра. Пĕчĕккĕренех сунара çӳренĕскер, вăл тискер тата вĕçен кайăксен йăлисене, пирĕн енче вĕсем ăçта тĕл пулнине лайăх пĕлет. Хальхинче ăста сунарçă кашкăр çинчен каласа пачĕ. Вĕсем çине вăл икĕ енлĕн пăхать: пĕр енчен, кашкăр - вăрман санитарĕ, çыннăн пулăшаканĕпе шанчăклă тусĕ - йытă тăванĕ, тепĕр енчен - хăрушă тискер кайăк, çынсене сăтăр тăвакан: Гайтан ялĕнчи пек, картари сурăхсене пăвассĕ (18 сурăх) е ĕне выльăха çурса тăкассĕ. Кĕскен каласан, сунарçăсем кашкăрсен тискер ĕçĕсем çинчен çителĕклĕ илтнĕ. Эпĕ те çав вăхăтра "Буран" снегоход туяннăччĕ, - каласа парать Ю.Н.Мордвинов, - кашни ир уй-хире тухаттăм, хăш чухне вара вăрманта та пулкалаттăм. Февраль уйăхĕ ăнăçлă пулчĕ: юрпа витĕннĕ хирпе кашкăрсем пĕрин хыççăн тепри иртнĕ - кашкăрсене кĕтсе илеймерĕм. Тепĕр ирхине эпĕ татах çавăнта кайрăм. Йĕрсем тăрăх кашкăрсем кунта пулни палăрчĕ, вĕсенчен пĕри вара Чулпан посадкинех çул тытнă. Çав йĕр тăрăх кайрăм. Мотор сасси кашкăра хăратрĕ пулмалла, вăл уçă хире сиксе тухрĕ те тарма пикенчĕ. Эпĕ ун хыççăн икĕ километр хăваларăм пулĕ. Кашкăр инкекне, ун çулĕ çинче çемçе юрпа тулнă тип çырма лекрĕ, вăл çавăнта кĕрсе ӳкрĕ те эпĕ ăна "Буранпа" пусăрăнтартăм. Чĕрĕллех тытрăм. Çăварĕпе урисене çирĕп кантрапа çыхрăм, шанчăклăрах пултăр тесе пуçĕнчен тимĕр таткипе çапрăм, яла илсе килсе сарайне ятăм, лайăх питĕрсе илтĕм. Хамăр ял çыннисем икĕ кун пирĕн пата кашкăр курма çӳрерĕç. Çынсене курсан кашкăр хаяррăн харлататчĕ, стена çине сикетчĕ. Кайран эпĕ ăна персе вĕлертĕм, тирĕнчен тир ату çĕлерĕм.



Вĕсем саккăртан кая мар пулнă. Йĕрĕсем мана выльăх масарĕ патне илсе çитерчĕç. Çав кунсенче унта вилнĕ ĕнене пырса пăрахнă пулмалла, выçă кашкăр кĕтĕвĕ ун çине сиксе ӳкнĕ, çапăçса кайнă, мĕншĕн тесен юра таптаса пĕтернĕ, юнпа, çăмпа вараланă. Çакна курсан эпĕ питĕ тĕлĕнтĕм, нумай вăхăт хушши пăхса тăтăм, çапах

Çакă кăсăк: çакăнтанпа нумай çул иртрĕ ĕнтĕ, анчах капкăрсене пирĕн енче урăх никам та курман.

Мордвинов сунарçă каласа панине çырса илсе, эпĕ ăна районти сунар ĕçне тĕпчекен В.И.Белова кăтартрăм. Ăна вăл ырларĕ тата çапла хушса каларĕ: çав хĕл Кăчăканлăри пĕр сунарçă (эх, хушаматне астумастăп!) ятарлă капкăнсемпе 6 (!) кашкăр тытнă. Вăт ку ĕç!

**В.КОМОЛОВ.**
**Нурлат хули.**

**P.S. Редакцирен. Камăн та пулсан çакăн пек чăн пулнă кăсăк историсем пур пулĕ. Çырса пĕлтерĕр, пичетлĕпĕр.**

## Таса шыв кăна сывлăх парать

Çу, паллă ĕнтĕ, ялан эпидемиологи лару-тăрăвĕпе çыхăннă, çавăнпа та шăп кăна çак вăхăтра ерекен чирсем сарăлассĕ. Шывра, апат-çимĕçре, тăпрара микробсем нумайланассĕ. Техника шывне юханшывран илессĕ те ăна ĕçме те ĕçлесе хатĕрлемесĕрех усă курассĕ. Техника шывĕпе усă курнă чухне вăл шăварма кăна юрăхли çинчен манмалла мар. Таса е таса мар шыв килнине мĕнле пĕлмелле? Техника шыв тăрăхĕн сооруженийĕсене - пăрăхсене, шыв пуçтаранакан колонкăсене хура тĕспе сăрлассĕ, ĕçмелли шыв илмеллисене кăвак тĕспе. Апат-çимĕçе (улма çырлапа пахча-çимĕçе), техника шывĕпе шăварса ӳстернĕскерсене, çиме тытăниччен ĕçме юрăхлă ăшă шывпа çумалла. Халăхăн çакна та пĕлмелле. Техника шывĕпе усă куракансем ăна вĕретсен те пыршă чирĕсемпе чирлеме пултарассĕ. Çапла, вĕретни гепатит чирне пуçаракан микробсене вĕлермест.

Шыв - çĕр çинче пурăнассин тĕп никĕсĕ пулнине ан манăр, анчах та таса шыв кăна сывлăх парать.

**Л.РОМАНОВ,**
**Куйбышев чугун çулĕн Ульяновск уйрăмĕнчи тĕп санитари врачĕ.**

*Хăна юррисем*

## Ир те, каç та çитсе курăттăм

Çеçенхир варринче, ай, çавра кӳл,
Çавра кӳл варринче кăвакал.
Кăвакалне персен, ай, чĕппи шел,
Чĕпписене персен - амăш шел.

Йăвара та сакăр, ай, çăмарта,
Анне, ил вĕсене пурне те.
Эпирех те çиччĕн, ай, пĕр тăван,
Пĕрне кăна ан сав, пурне те.

Тăваткал çеремре çырли нумай,
Çырлиех нумай та çĕр сахал.
Атте-анне панче ырлăх нумай,
Ырлăхĕ нумай та кун сахал.

Тăххăрăн çăпата сырас пулсан,
Аршăн-аршăн ярса пусăттăм.
Хамăрăн ачасем ялта пулсан,
Ир те, каç та çитсе курăттăм.

Кăвакарчăн макрать чĕпписемшĕн,
Чĕпписем макрассĕ амăшшĕн.
Эпир макăратпăр ачасемшĕн,
Ачасем макрассĕ пирĕншĕн.

**Пухса йĕркелекенĕ**
**Е.ИЛЮШКИНА.**



С.Майстер фотоэтюдĕ.

# Пĕлтерӳсем

1997 çулта туса кăларнă УАЗ-33036 васкавлă сутăнать, тентланă, бортлă. Адрес: Советская урамĕ, 183-86.

* * *

Нурлат районĕн МПП ЖКХне АДСра сменăпа ĕçлеме слесарьсемпе электрик кирлĕ. Штат расписанийĕ тăрăх тӳлессĕ.

МПП ЖКХ администрацийĕ.

* * *

1983 çулта туса кăларнă лайăх шайри ВАЗ-2106 сутăнать. Телефон: 3-12-33, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

1-мĕш ПМК - Октябрь МСО филиалĕ "Западный" микрорайонта "Нурлат утлары" магазин уçнă (афган поселокĕ). Сутлăхра - çăкăр-булка изделийĕсем, кондитер, консерв, табак изделийĕсем, пылак шывсем, сăра, йăла химийĕ.

* * *

Çӳрекен "Муравей" мотороллер запас пайсем валли сутăнать. Адрес: Фрунзе урамĕ, 9.

* * *

1989 çулта туса кăларнă ВАЗ-21083 васкавлă сутăнать. Телефон: 5-17-79.

* * *

Çурт сутăнать, мунча, сарай, нӳхреп, пахча - 0,25, сад - 0,10 сотка пур. Адрес: Киклĕ ялĕ, телефон: 5-19-64.

* * *

Нурлат районĕн МПП ЖКХне АДСра сменăпа ĕçлеме слесарьсемпе электрик кирлĕ. Штат расписанийĕ тăрăх тӳлессĕ.

МПП ЖКХ администрацийĕ.

* * *

1983 çулта туса кăларнă лайăх шайри ВАЗ-2106 сутăнать. Телефон: 3-12-33, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

1-мĕш ПМК - Октябрь МСО филиалĕ "Западный" микрорайонта "Нурлат утлары" магазин уçнă (афган поселокĕ). Сутлăхра - çăкăр-булка изделийĕсем, кондитер, консерв, табак изделийĕсем, пылак шывсем, сăра, йăла химийĕ.

* * *

**М.Б.Багрянцев врач**
**çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.**
**Пирĕн патра кăна!**

Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сиплĕнĕ чухне тăванĕсем пулма пултарассĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!

Сипленĕ кунсенче, эрнекунсенче, июнĕн 19-мĕшĕнче, июлĕн 3-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче 14 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.

* * *

"Нурлат сахăр завочĕ" ОАО хăйĕн акционерĕсене 1998 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче акционерсен çулталăкри пĕрлехи пухăвĕ пуласси çинчен пĕлтерет. Заводская урамĕ, 1, 13 сехет тĕлне пымалла.

**Пухăвăн кун йĕрки:**

1. Пухăвăн ĕç органĕсене суйласси, регламентне çирĕплетесси, шут комиссине йĕркелесси.
2. Обществăн генеральнăй директорĕн 1997 çулхи ĕç отчечĕ.
3. Общество директорĕсен Совечĕн членĕсене çирĕплетесси.
4. 1997 çулхи отчета, бухгалтери балансне, тупăшсемпе тăкаксене çирĕплетесси.
5. 1997 çулшăн аудитор пĕтĕмлетĕвне çирĕплетесси.
6. 1998 çула аудитор çирĕплетесси.
7. Ревизи комиссийĕн 1997 çулхи отчетне çирĕплетесси.
8. Ревизи комиссийĕн членĕсене суйласси.
9. 1998 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчи деноминацие пула уставной капиталпа акцисен номинальнăй хакне улăштарасси. Общество уставне хушусемпе улшăнусем кĕртесси.
10. Пĕлтернĕ акцисен чи пысăк калăпăшне палăртасси.
11. Хаклă хутсен формине улăштарма хаклă хутсен хуçисен килĕшĕвне илесси.
12. Обществăн шалти норматив документчĕсен положенийĕсене çирĕплетесси.

Акционерсемпе вĕсен представителĕсене 1998 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче ирхине 9.00 сехетрен пуçласа регистрацилессĕ. Адрес: Заводская урамĕ (общество клубĕнче). Акционерсем обществăн документчĕсемпе çак адреспа паллашма пултарассĕ: Заводская урамĕ, 1, администраци çуртĕ (экономика пайĕ). Телефон: 2-10-37.

Директорсен совечĕ.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860. 2336.